# "ЧУНРА ЮРАТУ ВА́РРИ АКМАСАН

**МĔН тери хăватлă çынсем çуралса çак çĕр çинче пултарулăх урлă тарăн йĕр хăвараççĕ. Вĕсен ĕçĕпе эпир хамăрăн чун савăтне тултаратпăр. Анчах та пултарулăхра палăрнă çынсенчен чылайăшĕпе куçран куçа тинкерсе калаçма май çук ĕнтĕ халĕ. Çапах та пирĕнпе юнашар вĕсен ачисем, мăнукĕсем пурăнаççĕ. Вĕсен асĕнче ашшĕ-амăшĕ сăнарĕсем сӳнмен-ха. Аса илӳ вучахĕн тĕлкĕшекен кăмрăкĕсене эпĕ паян чăвашра палăрнă композиторăн Анисим Асламасăн хĕрĕпе Татьянăпа пăтрататăп.**

- Атте маншăн яланах чи пĕлтерĕшлĕ çын пулнă. Вăл мана çутă çулĕпе утма вĕрентрĕ. Пултарулăхра хăйсене тупнă çынсем мĕн пур пулăма чун-чĕри витĕр кăлараççĕ. Унсăрăн вĕсен хайлавĕсем теприсен чĕрисене витереймĕччĕç. Çак çĕр çинче миçе çул пурăнни мар, мĕнле пурăнни хаклă. Атте Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламас ялĕнче кун çути курнă. Вăрçă вĕçленнĕ çул атте Киеври консерваторие вĕренме кĕнĕ. Вăл украинсен музыка паллă классике Лятошинский профессор класне лекнĕ. Шел, вĕренсе пĕтерейммен, виççĕмĕш курс хыççăн ӳпке туберкулезĕпе чирлесе укнĕ. Ана тухтăрсем, самай вăхăт сипленĕ хыççăн, тăван тăрăхра пурăнма сĕннĕ. Шупашкарта атте Çамрăксен театрне ĕçе кĕнĕ, музыка училищинче вĕрентнĕ. Хăйĕн пурнăçĕн чи йывăр тапхăрĕнче атте аннене тĕл пулнă, унăн чунне илемлĕ кĕвĕпе çĕнсе илнĕ. Паян эпĕ çапла шутлатăп: Аслă Турăсем аннепе аттене ятарласа тĕл пултарнă. Аннепе, Мария Васильевнăпа, паллашнă хыççăн атте хăйĕн чи чаплă произведенийĕсене хайланă. Анне те хăй вăхăтĕнче Саратоври консерваторие пĕтернĕ, чылай çул Чăваш юрăпа ташă ансамблĕнче вăй хунă, чăваш телевиденийĕн пĕрремĕш сасă режиссере пулнă, юрра-кĕвве тарăн туйнă, аттене яланах хавхалантарса тăнă. Аннепе пĕр вăхăтра Мефодий Денисов, Тамара Чумакова паллă артистсем те вĕреннĕ. Чăваш правительстви аттен ĕçне те, анненне те тивĕçлипе хакланă. Анне пурăнатьха, 79 çула çитрĕ.

**- Шăллăр Алексей Анисимович вара сирĕнтен пилĕк çул кĕçĕнрех. Паян вăл Чехи республикинчи Брно хулинче çемйипе пурăнать.**

- Шăллăм Хусанти тата Ленинградри консерваторисенче вĕренчĕ. Вăл пианист тата дирижер профессийĕне алла илнĕ. Шăллăм калама çук ĕçчен, хăйĕнчен те, çынсенчен те тивĕçлипе çирĕп ыйтма пултарать. Атте çавăн пекчĕ. Мăшăрĕпе Инна Игоревнăпа Хусанта паллашнă. Манăн кин питĕ талантлă педагог тата пианист. Вĕсен икĕ ача. Алексей 21 çулта, сĕрме купăс калать, квартет йĕркеленĕ, Европăри мĕн пур çĕршыва çитсе илемлĕ кĕвĕпе савăнтарать. Антон вара 17 çулта. Вăл пианист тата композитор. Пĕр пытармасăр каласан, аслашшĕпе асламăшĕн мĕн пур пултарулăхĕ ăна куçнă. Вăл мĕн пĕчĕкренех тĕрлĕ музыка произведенийĕсем çырать. Антон ачасен хор каппеллинче юрланă. Концертсем вăхăтĕнче ăна пĕчче юрлама та шаннă. Францире, Швейцарире, Германире, Австрире хăйĕн черчен сассипе пин-пин çынна тыткăнланă. Шăллăм ачисем малашне те тĕнчене тĕлĕнтерессе эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп. Иккĕшĕ те 5-6 чĕлхе пĕлеççĕ.

**- Çак тĕслĕх чăваш чăн та çĕр пин юрă çуратма пултаракан халăх иккенне тепĕр хут çирĕплетет... Анчах та ачара пултарулăх пулни çеç çитенĕхсĕр, ăна аталантармалла таске.**

- Килĕшетĕп. Шăллăм малтан Шупашкарта пурăнчĕ. Атте, мăнукĕсем икĕ-виçĕ уйăхра чухнех, вĕсене алла илетчĕ те пианино умне ларатчĕ. Лешсем кĕвве чунтан тăнлатчĕç. Эпĕ ачасем çемьене ахаль килменнине ĕненетĕп. Турă пĕтĕмпех курса-асăрхаса, саплаштарса тăрать.

**- Татьяна Анисимовна, эсир мана ытларах шăллăр ачисем çинчен каласа патар, хăвăр та музыкант-çке!**

- Эпĕ хам музыкант пуласса ачаранах пĕлнĕ. Анне, эпĕ пĕчĕк чух, мана яланах хăйпе пĕрле юрăпа ташă ансамблĕне репетицисене илсе çӳретчĕ. Ун чух эпĕ чăвашсен паллă композиторĕн Герман Лебедевăн хĕрĕпе Лелăпа туслăччĕ, артистсем юрлакан мĕн пур юрра пăхмасăр пĕлеттĕмĕр. Эпир пурăннă хваттерти икĕ пӳлĕмре те пĕрер фортепьяно пулнă. Мĕнле пушă вăхăт тупăнатчĕ, тӳрех музыка инструменчĕ умне ларнă. Манран композитор пулаймарĕ, анчах та эпĕ 30 çул ытла концертмейстерта тăрăшатăп, çамрăксене вĕрентетĕп. Композитор çырнă кĕвве ăнланса илсе, шалти тĕнчине витĕр туйса, курса вĕренекен патне илсе çитерме пултаратăп. Ачасене музыкăна вĕрентнĕ чух малтан шăплăха итлеме, сăнарлă шухăшлама хăнăхтаратăп. Сăнарлăха туякан ача чунĕнче кăмăл çуралать. Вăл вара чунри вăрттăнлăха упрать.

Ятарлă музыка пĕлĕвне эпĕ малтан Хусанти консерватори çумĕнчи пултарӳллă ачасен шкул-интернатĕнче илтĕм, унтан шĕкĕр хуламăрта Степан Максимов ячĕллĕ музыка шкулĕнче вĕрентĕм, каярахпа Шупашкарти музыка училищинче «пиллĕк» паллăпа çеç пĕтерĕм. Музыкăна ăнланма мана Ж.Рафаиловăпа Д.Ходяшева педагогсем те самаях пулăшрĕç. Мăшăрпа Александр Васильевич Захаровпа /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ/ çемье чăмăртарăмăр. 1977 çулта çак çĕр çине Никита ывăлăм килчĕ. Каярахпа ăнсăртран Никита Бичурин, чăвашсен паллă ăсчахĕ, ывăлăмпа пĕр çулта, анчах та ик çĕр çул маларах çуралнине пĕлтĕм.

**- Таçта чун тĕпĕнче эсир çакна туйнах ĕнтĕ...**

- Пытармастăп, хăйне евĕрлĕх кунта пурах. Ачам хырăмра чух тĕрлĕ ята хам ăшра каласа шалти кĕвве итлесе пăхрăм. Никита ят вара ман чĕрере питĕ çепĕççĕн янăрарĕ. Ача та çак ята варта чухнех йышăнчĕ. Эпĕ çак тĕнчене ывăл килесс малтанах пĕлсе - туйса тăтăм.

**- Халĕ музыка училищинче вĕрентетĕр, сирĕн алă витĕр эстрада артисчĕсем те тухнах ĕнтĕ...**

- Паллах, чылайăшне кĕвве туйма хăнăхтарнă эпĕ. Вĕренекенсем хăйсене юратнине тӳрех сисеççĕ. Пĕлетĕр-и? Чунра юрату вăрри акмасан - чун сунет. Студентсене вĕрентнине банка укçа хывнипе танлаштарма пулать пулĕ. Вăхăт иртсен банкри счет çинче процентсем хутшăнаççĕ. Кунта та çавах. Сăмахран, Олег Кăйкăр паян паллă композитор тата юрăç. Вячеслав Вахтеркина та аса илес килет. Вăл питĕ те хăйне евĕрлĕ юрăç. Мана ун сасси тата юрăсене еплерех шăрантарни питĕ



килĕшет. Чи пĕлтерĕшли, ман шутпа, вĕренекенсене пианино калама хăнăхтарни çеç мар, вĕсен шалти тĕнчинче кĕвĕ туртăмĕ çуратни. Ун чух тин çын чунĕнче пултарулăхра ĕçлес туртăм вăранать.

**- Мĕнле шутлатăр, искусство шоу-бизнесран уйрăлса тăрать-ши?**

- Каламасăрах паллă, шоу-бизнесра укçа хуçаланать, искусствăра вара - чун. Чăн-чăн искусствăна вăхăт тĕрĕслет. Вăхăт пĕтĕмпех хăй вырăнне лартать. Хăвăрах асăрханă пуль: чунран хайланă произведенисенче юрату пур. Сăмахран, сăрра çуса пăрахсан куç умне чăн-чăн сăн-сăпат тухса тăрать. Шоу-бизнесри илемпе янăрав - вăхăтлăх пулăм. Чăн-чăн искусствăри хитрелĕх вара ĕмĕрсем иртсен те хуралмасть.

**- Сирĕн шутпа, мĕн-ши вăл юрату?**

- Юрату вăл - чĕре çути. Юрату чĕререн тухсан çеç вăйлă та черчен. Паян çак çепĕç те ачаш туйăма вылянтшайне антарса лартрĕç. Çакăншăн ман питĕ чун хурланать. Секс вăл - юрату никĕсне тытса таракан вăй-хăват, хамăр хыççăн пурнăçа тăсмалли мел.

**- Тăван çĕршывра та, тулай енче те эсир чăваш кĕпе-тумтирне пропагандăлама тăрăшатăр.**

- Эпĕ хамри чăвашлăха витĕр туйса тăратăп. Чăваш кĕпи-тумтирĕ ман чуна упрать, çунат хушать. 2000-мĕш çулта эпĕ тусăмсемпе пĕрле Киевра З.Душкова ячĕпе йĕркеленĕ "Твори, моя любовь" культура фестивальне хутшăнтăм. Ман çире, паллах, чăваш хĕрарăмĕн кĕпи, тухйипе тевечĕ, эрешĕсем пулнă. Унта эпĕ юлашки вăхăтра палăрнă историкпа, философпа, публициста, 50 ытла кĕнеке авторĕпе, тĕнче тăрăх хăйĕн пултарулăхне сарса çӳрекен Зиновья Васильевна Душковăпа хутшăнтăм. Унăн амăшĕ Вăрмар тăрăхĕнчи чăваш, ашшĕ вара - гагауз. Çак тĕнчене ăслă та маттур чăваш юнĕ хĕрарăм Молдавире килнĕ. Ун чух атте ыйтнипе эпĕ Киеври пĕр чиркĕве кĕрсе ун валли пĕчĕк турăшпа пĕрле пачăшкăран пил илсе килтĕм. Çав турăша вăл мĕн виличчен минтер айне хурса сыварчĕ. Ара, аттешĕн Украина питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнă-çке. Кунта хăй вăхăтĕнче ун чунĕнче мĕн чухлĕ илемлĕ кĕвĕ çуралнă.

2001-мĕш çулта çак культура фестивалей 2-мĕш уявне Чăваш Енре ирттерчĕç. Пирĕн республикăна ханасем Раççейри тата унăн тулашĕнчи 38 хуларан пухăнчĕç. Тĕрлĕ хулара иртнĕ фестивальсене /Красноярск, 2002 çул, Кемĕр, 2003 çул, Владивосток, 2004 çул/ хутшăннă эпĕ. Кашнинчех ман çире чăваш тĕррисемлĕ, вăй-хăвачĕллĕ кĕпе пулнă.

**- Паллă çын ачи пулма пĕрре тĕ çăмăл мар. Яланах, эсĕ камне пĕлсен, сана халăхра палăрнă аçупа е аннупе танлаштарма пуçлаççĕ. Çакăн пирки мĕн калама пултаратăр?**

-Эпĕ ыттисен хушшинче хам "шурă курак" пулнине нихăçан та асăрхаман, çапах та, пĕр пытармасăр каласан, кĕвĕçӳ мĕн иккенне чун-чĕрепе туйса курнă. Тата эпĕ ыттисен пек маррине мĕн ачаран ăнланаттăм. Апла пулсан та, пуç каçăртса та, мăнаçланса та, курнăçланса та çӳремен. Аттепе анне пекех хама çынсемпе сăпайлă тытнă, тарават пулнă.

**- Асăр чăваш халăхĕ валли чылай кĕвĕ-юрă çырнă. Унăн дневникĕсене, кĕввĕн малтанласа çырнă тексчĕсене, нотăсене, пĕр сăмахпа, вăл хăварнă тупрана, кам упрать?**

- Атте хыççăн чăматанĕ-чăматанĕпе архив юлчĕ. Хальлĕхе ăна килтех упратпăр. Йĕркене кĕртсен хула музейне парăпăр. Аттен хăш-пĕр япалине эпир халĕ те музейсене панă-ха. Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе йĕркеленĕ курава атте вăрçă вăхăтĕнче алăпа çырнă пĕчĕк кĕнекине патăмăр. Ана Турă яланах сыхланă çав, чăваш халăхĕ валли сумлă ĕçсем тăвасса çулти хăватсем пĕлнех. Атте, аккордеонпа питĕ лайăх каланине пула, музыка взводне лекнĕ. Контузи хыççăн госпитальте сипленнĕ. Çав вăхăтра унăн взводне фашистсем пуçĕпех тĕп тунă. Мĕн виличченех аттешĕн çак хăрушă пулам чун суранĕ пулса юлчĕ.

Аттене, ăна хаклакансем, "чăваш Дунаевскийĕ" тетчĕç. "Поэт чĕри" операна вăл Çеçпĕл Мишшине, çулăмлă сăвăçа, халалланă. "Иван Яковлев" оперăри оркестр валли кĕвĕ çырма вăл Антон мăнукне пиллесе хăварчĕ. "Никита Бичурин", "Священная дубрава", "Прерванный вальс" оперăсем те хăй вăхăтĕнче çынсене хăватпа тĕлĕнтернĕ, илемлĕх тĕнчине илсе каяна. Унăн юррисене Таисия Шоркина - Канаш районĕнчи Сиккасси ялĕнче çуралса уснĕ паллă юрăçă - шăпчăк пекех шăрантаратчĕ. Çак шăнкăр шыв юххилле сасăллă юрăç валли атте ятарласа юрăсем çырнă.

Унăн юррисемпе кĕввисенче - çутă та таса юрату. Вăл нихçан та, хальхи композиторсем пек, укçашăн çырман. Вăл чăн-чăн ӳнерçĕ пулнă. Вĕсем вара хăйсен хайлавĕсене чĕре юнĕпе çыраççĕ. Эпир атте çырнă оперăсене курма театрсене çемйипех çуреттĕмĕр. «Эпĕ мĕнле çын иккенне пĕлес тесен эпĕ çырнă юрра-кĕвве итлĕр», - тетчĕ вăл пире. Халь ак аттешĕн тунсăхласа çитсен эпир çемйипех вăл çырнă кĕвĕсене итлесе чунсене çырлахтаратпăр. Çакна та каласшăн эпĕ. Паян çынсене оперăсем интереслентерсех каймаççĕ, пурте çăмăл кĕвĕллĕ эстрада юррисене кăмăллаççĕ. Анчах та лайăх кĕвĕ вăхăчĕ, чунлăх саманчĕ те çитĕ-ха. Ун чух оперăпа балет театрĕнче пĕр пушă вырăн та пулмĕ.

**- Мĕн вăл сирĕншĕн музыка?**

- Музыка маншăн - пурнăç. Пире хупăрлакан çут çанталăк /шăнкăр шыв юххи, шур пĕлĕтсем тӳпере вĕçни, çулçă шĕпĕлтетĕвĕ, кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетĕвĕ.../ пĕтĕмпех кĕвĕрен тăрать. Ăна шалти туйăмпа, черепе итлеме çеç пĕлмелле.

**Альбина ЮРАТУ калаçнă.**